«Халăх тăрăшнипе, патшалăх пулăшнипе»

# Ярославкăсем шывпа тивĕçтересси çине тимлĕх ытларах уйăрчĕç



Çапла пĕлтерчĕ Муркаш муниципалитет округĕн Ярославка территори пайĕн ертӳçи Регина Флангова вырăнти хăтлăхшăн ытларах ĕçлемеллине, çынсенчен пуçарулăх тухмаллине палăртса.

Ярославкăсен пуçарулăх бюджечĕн программипе хальлĕхе проект нумаях пулаймарĕ пулин те, кунта ĕçлеме тăрăшаççĕ. Ку таранчченхи проектсене тишкерсен вĕсем юлашки çулсенче ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе ытларах ĕçлени курăнать.

– Нискасси ялĕнче 2022 çулта шыв сечĕсене çĕнетсе улăштартăмăр. Ĕçсене «ТЕХЭНЕРГОКОМПЛЕКТ» чикĕллĕ яваплăхлă общество 8 миллион ытла тенкĕлĕх пурнăçларĕ. Ял çыннисем ĕçсене туса ирттерме хăйсем те сахалах мар укçа пухрĕç, 800 пин тенкĕ ытла пуçтарчĕç вĕсем.

Çавăн пекех ярославкăсем 2023 çулта пуçарулăх бюджечĕн программипе усă курса Елшикра шыв çыхăнăвĕн сетьне улăштарчĕç. Ĕç хакĕ 3 млн тенкĕ пулчĕ, ĕçе «ТЕХЭНЕРГОКОМПЛЕКТ» чикĕллĕ яваплăхлă общество пурнăçларĕ.

Ку енĕпе 2024 çулта тумалли объект калăпăшлăрах. Çак çулта программăн пĕрремĕш тапхăрĕпе икĕ шыв башни улăштармалла: пĕри – Çĕмĕртлĕх Чемейре, тепри – Чемейре.

Çĕмĕртлĕх Чемейре пурăнакансен проект хакĕ 1 миллион та 491 тенкĕ ытларах. Территори пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, конкурспа ĕç хакĕ унччен палăртнинчен кăшт пĕчĕкленнĕ, 1 миллион та 327 пин те 412 тенкĕпе танлашнă. Çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтерес ĕç валли республика бюджетĕнчен 762 пин те 831 тенкĕ уйăрнă, вырăнти бюджетран – 381 пин те 415 тенкĕ, ытти пайĕ – ял çыннисенчен.

Ĕç подрядчикĕ Сергей Елов уйрăм предприниматель пулнă.

Çак проекта пурнăçлассинче Владимир Семенов активист сахал мар тăрăшнине пĕлтерчĕç вырăнтан. Кирек епле ыйтăва та пĕрле пулсан кăна ăнăçлăрах, хăвăртрах татса пама пулать.

Иккĕмĕш проект та шыв башнине юсаса çĕнетессипе çыхăннă. Палăртма кăмăллă, «ТЕХЭНЕРГОКОМПЛЕКТ» чикĕллĕ яваплăхлă общество асăннă территори пайĕпе ĕçлĕ çыхăнăва пĕрремĕш çул кăна мар тытать. Иккĕмĕш объекта пурнăçлама та асăннă организаци килĕшнĕ.

Чемей ялĕнчи шыв башнин юсав проекчĕн малтанхи хакĕ – 1 миллион та 491 пин те 475 тенкĕ. Конкурспа хак кăшт кăна улшăннă, 1 миллион та 431 пин те 816 тенкĕпе танлашнă. Республика бюджетĕнчен – 60 процент, 859 пин те 089 тенкĕ, вырăнти бюджетран – 30 процент, 429 пин те 544 тенкĕ, ытти пайĕ – ял çыннисенчен – 10 процент, 143 пин те 181 тенкĕ.

Территори пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, ялсенче ĕçмелли шывпа тивĕçтерес ыйтăва майĕпен татса панипе çынсем кăмăллă.

Çак ĕçре Валерий Прохоров активлă пулнă. Ĕçсене хальлĕхе вĕçне çитернĕ пирки документпа çирĕплетмен.

# Ĕçсем малалла пыраççĕ

Республикăра пуçарулăх бюджечĕн программипе пирĕн районта малтан икĕ ял тăрăхĕ ĕçлеме пуçларĕ, вăл шутра малти ретре Юнкă ял тăрăхĕ те пулчĕ. Вĕсем халĕ çулсеренех çак программăна хутшăнса вырăнти хăтлăх ĕçĕсене тума тăрăшаççĕ. Иртнĕ çул Кăпас ялĕнчи Школьная, Çĕнтерӳ, Запрудная урамсенчи шыв çыхăнăвĕн сетьне юсаса çĕнетме май килчĕ. Проект хакĕ 3 млн та 822 пин те 513 тенкĕпе танлашрĕ, ял çыннисенчен 382 пин те 252 тенкĕ пухнă. Ĕç подрядчикĕ «Техэнергокомплект» чикĕллĕ яваплăхлă общество пулчĕ.

Тепĕр объект та çакăн йышшиех. Çармăçкассинчи шыв пăрăхĕн çыхăнăвĕн сетьне юсассин проект хакĕ татах та пысăкрах, 8 млн та 292 пин те 372 тенкĕ, ял çыннисенчен 864 пин те 38 тенкĕ пухрĕç. Объект подрядчикĕ – «Альянс Групп» чикĕллĕ яваплăхлă общество. Кăпасри Запрудная тата Çĕнтерӳ урамсенчи çулсене юсарĕç, проект хакĕ 800 пин тенкĕ ытла. Подрядчикĕ «Гудвилл» чикĕллĕ яваплăхлă общество пулчĕ.

– Ку енĕпе пирĕн кăçал та объектсем пур. Виçĕ проект палăртнăччĕ, анчах та хальлĕхе пĕрне кăна вĕçлеме май килчĕ-ха. Канаш выççăлккинче пушар хăрушсăрлăхĕ валли шыв илмелли вырăн турăмăр. Проект хакĕ 811 пин те 506 тенкĕ. Республика бюджетĕнчен 60 процент, 486 пин те 903 тенкĕ уйăрчĕç, вырăнти бюджетран – 30 процент, 243 пин те 451 тенкĕ, ытти пайĕ – ял çыннисенчен – 10 процент, 81 пин те 150 тенкĕ, – терĕ территори пайĕн пуçлăхĕ Сергей Самуков.



Канаш выççăлккинче ĕçе вĕçленĕ.

# Шыв кĕртессипе, пĕве тасатассипе тăрăшаççĕ




Яракра пĕве тасатаççĕ.



Тасатнă пĕве шывпа тулать.

– Юлашки çулсенче çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе, урам хушшинчи çулсене юсассипе çине тăрса ĕçлетпĕр, çынсем ыйтнă тăрăх пĕвесене те тасатма, çирĕплетме тăрăшатпăр. Пурнăçламалли ĕçсем тупăнсах тăраççĕ. Пуçарулăх бюджечĕн проекчĕсене пурнăçлама патшалăх тимлĕх уйăрни те питĕ лайăх, пулăшăвăн усси пур.

Иртнĕ çулсенче çак программăна хутшăнса Шомикри Ториково урамĕнче çул юсама, Пошкар урамĕнчи ача-пăча вăйă площадки йĕркелеме пултартăмăр, Шатракасси масарĕ çинче çурт тума вăй çитертĕмĕр. Анаткасри Заовражная урам çулне юсарăмăр, Çеçмерте шыв уçламалли башня турăмăр.

Шомик ялĕнчи Пошкар тата Полевая урамсенчи çынсем пĕрремĕш çул мар шывсăр тертленеççĕ. Ку проект хакĕ сакăр миллион тенкĕ ытла пулнăччĕ. «Альянс-Групп» чикĕллĕ яваплăхлă общество иртнĕ çул пысăк ĕç туса ирттерчĕ.

Республика конкурсĕн иртнĕ çулхи иккĕмĕш тапхăрне хутшăннă проект та пулчĕ пирĕн. Вăл Шомик ялĕнчи скважинăпа шыв башнине тĕпрен юсассипе çыхăннăскер.

Кăçал Шомик ялĕнче ытти урамсенче шыв пăрăхне улăштарассипе ĕçсем пыраççĕ, – çапла пĕлтерчĕ Катькас территори пайĕн пуçлăхĕ Геннадий Лебедев.

Вырăнти администрацирен пĕлтернĕ тăрăх, катькассем кăçал пуçарулăх бюджечĕн виçĕ проекчĕпе ĕçлеççĕ, вăл шутра пĕри – Шомик ялĕнче шыв пăрăхĕсен тытăмне юсасси. Çак ĕç хакĕ пысăккисен шутĕнче, сметăпа палăртнă тăрăх, 7 миллион та 215 пин ытла тенкĕпе танлашать. Ку объекта ял халăхĕ 721 пин тенкĕ укçа хывнă. Палăртрăмăр ĕнтĕ, ку ĕç малалла пырать.

Унсăр пуçне катькассем кăçал икĕ проекта вĕçне çитернĕ. Пĕри – Калайкассинче. Унта пĕве тасатнă тата çыранне çирĕплетнĕ. Питех те кирлĕ ĕç, çыран çирĕплĕхĕсĕр çурхи шыв-шур пĕве пуçне илсе тарать. Ĕç хакĕ 496 пин ытла тенкĕ, çынсен тӳпи 49 пин ытла тенкĕпе танлашать. Вырăнти бюджетран – 148 пин ытла тенкĕ, республика 297 пин ытла тенкĕ хывнă.

Палăртма кăмăллă, территори пайĕсенче пуçарулăх бюджечĕн проекчĕсене пурнăçлассипе Алексей Тимофеев уйрăм предприниматель лайăх ĕçленине пĕлтереççĕ вырăнсенчен. Геннадий Лебедев та унăн ĕçне лайăхпа палăртрĕ. «Вăхăтра тата лайăх ĕçлерĕ», – терĕ вăл.

Пуçаруллă çынсене ятран асăнни ытлашши мар. Вĕсем: Калайкакссი ял старости – Владимир Клопов, çавăн пекех Геннадий Горланов, Юрий Горланов.

Ярак ялĕнчи Советская урамра пурăнакансем те пĕве тасатма шухăшланă кăçал. Вĕсен ĕçĕ калăпăшлăрах, çавна май проект хакĕ те пысăкрах, 1 миллион та 228 пин ытла тенкĕ. Çак ĕçе вырăнти бюджетран 368 пин те 631 тенкĕ хывнă, республикăран – 737 пин те 263 тенкĕ.

– Ĕç подрядчикĕ «Стройавтохозяйство» чикĕллĕ яваплăхлă общество пулчĕ. Ертӳçи – Артем Шашков. Çак организаци ĕçе лайăх тата графикпа килĕшӳллĕн пурнăçларĕ.

Ку енĕпе хамăр тăрăхри активлă çынсене те палăртса хăварас килет. Аверкий Клопов – депутатсен Муркаш муниципалитет округ пухăвĕн депутачĕ, ыттисем – Лия Клопова, Валерий Кудряшов, Лев Фомин, – терĕ вырăнти ертӳçĕ.

**Проект Чăваш Ен Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**